## ЛЕРМОНТОВ ТАТА ИВАНОВ

Константин Иванова студентсен пăлхавне хутшăннăшăн 1907 çулхи мартăн 7-мĕшĕнче «хурах йăхĕ» тесе чăвашсен Чĕмпĕрти шкулĕнчен хăваласа кăларнă. Анчах чăваш халăхне тĕне кӳртсе патша умĕнче пуç усса тăракан чура тăвас тесе пĕтĕм хура вăйне панă И.Яковлев, Чĕмпĕр шкулĕн директорĕ, чăваш кулакĕсен аслашшĕ, Константин Ивановăн вăйлă талантне витĕрех пĕлсе тăнă, тĕн кĕнекисене куçарас ĕçре унăн шыв пек юхакан чĕлхе пуянлăхĕпе усă курасшăн пулнă, çавăнпа ăна çав çулах кĕркунне хăй патне каялла чĕнсе илнĕ.

— Усăллă çын пул, Кĕçтенттин. «Библи» кĕнекине куçарас пулать, — тенĕ вăл.

Чăваш поэзин шăнкăр-шăнкăр юхăмне чунĕнчен юратакан шăнкăрч чĕппи вараланчăк шывра ишесшĕн пулман, вăл таса çăлкуçĕ патне туртăннă. Çакă çăлкуçĕ Ивановшăн вырăс халăхĕн чаплă поэчĕ Михаил Лермонтов пулнă. Вăл унăн «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юрă» ятлă поэмине куçарнă. Иванов куçару ĕçĕ çине пысăк тимлĕхпе пăхнă, вулакансене ăнланмалла пултăр тенĕ. Вăл чи малтан хăй куçарнине хут пĕлмен çынна, шкул хуралçине, Никки Иванне вуласа панă. Унтан тин Яковлев патне кайнă. Чăваш культури çинчен калаçакан этемсене «шыв çине сенĕкпе çыру çыратăр» текен Яковлев Иванов куçарнинчен тĕлĕннĕ. Аслă вырăс поэчĕ чăваш чĕлхинче вырăслинчен начар янăраман. Иванов хăйĕн тăшманне пĕр вăхăтлăха çĕнтернĕ, ватă генерал умĕнче унăн ăста чĕлхи хĕç вырăнне пулнă.

Çакăн хыççăн чăваш поэчĕ Лермонтовăн «Чул ту», «Парăс», «Пурнăç курни» тата «Хумсемпе çынсем», «Пирĕшти» сăввисене куçарнă. Пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарасси почта ямшăкĕ пек пĕр ялтан теприне каясси мар.

Куçараканăн сăмахсемпе куплетсене пăлтăр-палтăр çавăркаласа каймалла мар, произведенин формипе ăш-чикне пăсмасăр тата художествăлла элеменчĕсене çухатмасăр куçармалла. Иванов поэзи çулĕ çине тухиччен 1906—1907 çулсенче тухса тăнă чăвашсен малтанхи «Хыпар» хаçатне курkалана, Тайăр Тимкки, М.Акимов, Шелепи тата ытти писательсем çырнисене тĕл пулкаланă. Чăваш литератури тин çеç çуралса сăпка çинче силленнĕ. Вырăс илемлĕ литературине куçарас ĕç те пуçланманпа пĕрех. «Хыпар» хаçатра Короленкăн «Огни» калавĕ тата Крыловăн хăш-пĕр юптарăвĕсем кăна тухкаланă. Çапла ĕнтĕ Иванов пуш хир варринчи пĕччен çын пек пулнă, тĕреклĕ пусса утма маларах хывнă сукмаксем пулман. Паллах ĕнтĕ, унăн умĕнче ылтăнăн та ахахăн çиçсе тăракан халăх пултарулăхĕ пулнă: ваттисем туйсенче, ĕçкĕсенче такмакланă, çĕлен пек авăнакан утсем çинче каччăсем тата вăйăсенче çĕмĕртлĕх витĕр курăнакан акăш пек шурă тумлă хĕрсем юрланă. Халăх чĕлхи тата фольклор литература чĕлхине тумалли çирĕп никĕс пулнă.

Чаплă пахчаçă Мичурин тĕрлĕрен пан улмисене суйласа илсе вĕсенчен чипер пан улми туса ӳстернĕ. 17 çулхи Константин Иванов та яка чĕлхе тăвас тĕлĕшпе Мичурин тивĕçлĕхне йышăннă, халăх чĕлхинчен чи лайăх тĕпренчĕксене пухса кристаллă таса литература чĕлхине тăвас ĕçе пуçласа янă. Эпир Лермонтов произведенийĕсене куçарнисенче хăюллă утăмсен сассине илтетпĕр. Лермонтовăн сăввисенче сăмахсем сăнчăрти ункăсем пек хытă çыхăнса тăраççĕ. Çакă çыхăнура таçта вĕçсе каяс пек туртăнакан тарăн шухăшсем пĕрлешнĕ. Лермонтов хăйĕн шухăшĕсем тарăн та ыттисене паллă мар иккенне кăтартса çапла çырнă:

Кто может, океан угрюмый,
Твои изведать тайны? Кто
Толпе моей расскажет думы?
Я — или бог — или никто!

Лермонтов хăйĕн кăмăлĕпе шухăшĕсене куç пăвнă тимĕр карта ăшĕнчи пек, унăн çăрине никам та уçса кĕрес çук пек шутланă. Анчах пĕр ĕмĕр иртсен хăй пекех ир шухăшлама пуçланă çамрăк Константин Иванов унăн тимĕр картине уçнă, унăн шухăшĕсене ăста куçарса чăваш халăхне каласа панă.

«Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юрă» Лермонтов пултарулăхĕнчи чи хăватлă произведенисенчен пĕри пулса тăрать, тата вăл

халăх юррисем майлă çырнă пысăк ăсталăхĕпе тĕлĕнтерет. В.Белинский ун çинчен çапла çырнă: «Лермонтовăн поэмине эсир епле кăна тинкерсе пăхсан та пĕр ытлашши е çитеймен сăмах, йĕр, сăвă тата сăнлăх тупаймăр, пĕр начар вырăн та çук — пурте унта кирлĕ, тулли вăйлă!.. Лермонтовăн поэми — сулмаклă япала, пиçсе çитнĕскер, вăл мĕн чухлĕ илемлĕ, çавăн чухлех халăхăн». Патша тӳре-шари Лермонтова 1837 çулта Пушкина вĕлернине хирĕç пĕтĕм чунĕнчен питлесе сăвă çырнă хыççăн Кавказа ссылкăна янă. Литературăри тĕпчевçĕсем кăтартнă тăрăх, çакă поэмăна та Лермонтов Пушкина асăнса çырнă Иван ĕмпӳ аскăн Кирибеевич сыхлавçине вĕлернĕшĕн тӳрĕ кăмăллă та вĕри чĕреллĕ Калашников хуçан пуçне кастарать. Лермонтов хăйĕн чăн-чăн шухăшне пытарас пирки тахçан ĕлĕк пулса иртнĕ ĕçсемпе çыхса кăтартнă имĕш. Чăнах та, Кирибеевич Дантес пек, Иван ĕмпӳ Пĕрремĕш Николай пек, Калашников Пушкин пек пирĕн ума тухса тăраççĕ. Çакă шухăша тĕрĕсех теме юрать, мĕншĕн тесен Пĕрремĕш Николай патша вилекен Пушкина: «Эпĕ санăн арăмупа ачусене хыснаран пулăшăп», — тенĕ. Иван ĕмпӳ те Калашникова унăн пуçне касас умĕн çапла калать:

Эппин юрĕ, ача, сана çакăншăн,
Сатур паттăр çын, хуçа ывăлĕ,
Чĕререн çапла каланăшăн
Тăлăх ачусемпе çамрăк арăмна
Хыснаран паратăп тивĕçлĕ укçа.

Константин Иванов куçарнă чухне чăваш халăх юррисен тата туй такмакĕсен виçине илнĕ. Хăш-пĕр вырăнсенче содержани енчен те кăшт улăштарнисем пур.

И разделят по себе злы татаровья
Коня доброго, саблю острую
И седельцо браное черкасское...—

çакă Кирибеевич сăмахĕсене Иванов çапла куçарнă:

Курайман тăшмансем уйăрса илĕç
Ырă утăмпала çивчĕ хĕçĕме,
Ырă утăм çинчен йĕнерне хывĕç...

Иванов «усал тутарсем» вырăнне «курайман тăшмансем» тет. Иванов пур вырăнта та «православный», «христианский» тенĕ эпитетсене пăрахать, поэмăн вĕçĕнче: «Всему народу христианскому Слава!» тенине улăштарать, «Мухтав мĕнпур халăха! Мухтав!» тесе пĕтерет.

«Христианский», «православный» эпитетсене кăларса вăркăтни ăнсăртран манса юлнă япала мар. Иванов халăх шухăшне сума сунă. «Христос тĕнĕ ячĕпе» çаратакан нӳхреп куçлă пупсене халăх чунĕнчен курайман, хăйĕн юмахĕсенче те вĕсене кулăш кустăрми çумне çыхса кустарнă. Тĕн çыннисене килĕштерменни Иванов юнĕнчех традици тăрăх пынă. Ивановăн авалхи тăванĕсем Пелепей хулине пуçласа яракансем, никĕс хуракансем пулнă. Вĕсем, тĕне кĕменскерсем, хулари чиркĕве çунтарса янă. Вара пупсем чул чиркӳ ларттарнă, каллех хăйсен пусмăрне çирĕплетес тесе куланайсем хурса хăратма тытăннă. Пуç усма юратман чăвашсем чиркĕве çĕмĕрсе кĕнĕ те турăшсене çырмана кайса пăрахнă. Пугачевпа пĕрле пулнă авалхи тăванĕсем пупсене çакни çинчен Иванов пĕлнех ĕнтĕ, унсăрăн хăйĕн йăхĕн историне çырас плана хучĕсен хушшинче виличченех усраман пулĕччĕ. Унăн Пелепейри тăванĕсене чиркӳ çунтарнăшăн тата яланах пăлханнăшăн Елизавета Петровна майра патша хула вырăнĕнчен хăваласа кăларнă.

Иванов Лермонтова куçарнă чухне юрă виçисемпе усă курнă. Паллах, унăн хăш-пĕр куçарăвĕсенче тоника виçи те уççăн палăрать, анчах пуринчен ытла силлабика пысăк вырăн йышăнать. Лермонтов «Парăс» сăввине ямб виçипе çырнă. К.Иванов урăхла виçепе куçарнă.

Пĕччен парăс шуррăн курăнать
Кăвак тинĕс тĕтри ăшĕнче...
Мĕн инçе, ют çĕрте вăл шырать?
Мĕн хăварнă вăл хăй килĕнче?

Çак илсе кăтартнă йĕркесенче малтан пуçласа вĕçне çитичченех малтанхи икĕ сыпăк пусăмсăр та виççĕмĕш пусăмлă. Тап-таса анапест виçи! Кунта Лермонтовăн янăравлă поэзийĕ чăваш поэтне тоника виçине ăнланса илме пулăшни уççăнах курăнать.

Иванов Лермонтовран нумай вĕренни çинчен унăн малтанхи пултарулăх сăнавĕсем аван каласа параççĕ. Вăл 1907 çулхи кĕркунне «Шуйттан чури» ятлă трагеди çырма тытăннă.

Пĕлĕт саншăн тимĕр пулĕ,
Тĕнче саншăн тамăк пулĕ,
Санăн кĕллӳ тĕтĕм пулĕ.

Çак трагеди умĕнчи сыпăк-эпиграф пурнăç шăпинчен ниçта та уйрăлса тарас çуккине, Лермонтовăн фатализмне аса илтерет. Трагедин кĕске содержанийĕ çапла. Икĕ

тăван — пиччĕшĕпе шăллĕ — мул пухас ĕмĕтпе арăмĕсемпе амăшĕн куççулĕсене пăхмасăр вăрçа тухса каяççĕ, вилнисен тумĕсене хываççĕ, аманнисен кĕсйисене хыпашлаççĕ. Аманнă çынсем йынăшакан вăрçă хирĕнче вĕсен хутаçĕсенче ылтăн янăрать. Асли тата пуяс тесе шуйттанпа паллашать, укçашăн чунне сутать, шуйттан хĕтĕртнипе вăл хăйĕн шăллĕне вĕлерсе унăн укçине илет, канăçа пĕлмесĕр мухтанать:

Текех канăççăр çынсем
Вăрçăсенче çӳреччĕр!
Мана тата мĕн çитмен?
Манăн акă пурте пур:
Ылтăн, кĕмĕл — манăн вăл.
Ялти пуян — эпĕ вăл,
Укçа пулсан мул та пур,
Унтан урăх мĕн кирлĕ?

Савăннă шуйттан кĕввине итлесе этем ăсран кайса ташлать. Эпĕ кунта юмахăн пĕрремĕш пайне çеç илтĕм. Çакăнтан та Лермонтов шухăшĕн ӳкерчĕкĕ палăрса тăрать. Лермонтовăн «Демон» поэмăри Тамара çунатлă Демона юратнă пирки чунне парать пулсан, Иванов геройĕ укçашăн чунне сутать. Укçа кĕвви ытти произведенисенче те пĕрмаях илтĕнет.

Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать, —

тет Иванов «Нарспи» поэмăн прологĕнче. Укçа тĕнчинче хăйĕн телейне çухатнă Нарспи хăйне хăй вĕлерет. Иванов «Шуйттан чури» трагедие çырса пĕтермен. Романтизм сывлăшĕпе вăл нумай сывламан, хăвăртах пурнăçа витĕр пăхакан реализм юхăмĕ ăна туртса илнĕ. Иванов вара «Нарспи» поэмине çырать.

Эпир «Нарспи» поэмăра та Лермонтовăн «Мцыри» поэминче пĕр пек вырăнсем пуррине сисетпĕр. «Вăрманта» пайне Мцыри аçа та çиçĕмлĕ çĕрле утнине танлаштарса пăхăр-ха:

Я убежал. О, я как брат
Обняться с бурей был бы рад.
Глазами тучи я следил,
Рукою молнию ловил.

К.Ивановăн:

Епле Сетнер мĕскĕн-çке
Урнă вăрман ăшĕнче,

Епле çирĕп йывăçсем
Юрлаççĕ пуç тăрринче.
Вăрман хĕсĕк çулĕпе
Ăш çуннине пусарса,
Вăрман шавне хуплас пек,
Сетнер пырать юрласа.

Икĕ поэт та çанталăкри, пурнăçри тăвăла юратаççĕ, ăна ӳкерсе çырнă чухне вĕсем иккĕш те вайлă.

Ивановпа Лермонтов хушшинче пĕр ĕмĕр выртать пулсан та, анчах пурнăç шăпи вĕсен пĕр пекех хĕн-хурлă:

И скучно, и грустно!
И некому руку подать
В минуту душевной невзгоды...
Желанья... что пользы напрасно
и вечно желать?
А годы проходят —
все лучшие годы.

Лермонтов ссылкăран хăтăлса пĕтĕмпех литература ĕçне тытăнасшăн çӳрет, анчах ниепле те хăтăлаймасть. Юлашкинчен Машук тăвĕ çинче ăна патша тарçисен пули уран ĕмĕрлĕхех ӳкерет. Константин Иванов чăвашсем хушшинче Бенкендорф пек пулса тăнă Яковлев тыткăнĕнче хăрса çитсен тăван ялне кайса 1915 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче вилет.

Икĕ туслă халăхăн икĕ поэчĕ пĕр ĕмĕр урлă алă парса туслашаççĕ. Вĕсем гениаллă çамрăксем, иккĕш те ир пуçланă, патша самани иккĕшне те çамрăклах çĕре кĕртнĕ.

1840 çулта патша йĕрки умĕнче нихçан та пуç усмасăр кĕрешнĕ чаплă критик Виссарион Белинский: «Çутта тухнă государствăллă 1940 çулхи Российăна курма пултаракан ывăлсен ывăлĕсене тата вĕсен ывăлĕсене ăмсанса кĕвĕçетпĕр», — тенĕ. Эпир кăçал Лермонтов çуралнăранпа 125 çул тулнине уявларăмăр. 1941 çул — вăл вилнĕренпе 100 çул тулассине пĕтĕм çĕршывпа асăнса ирттерме хатĕрленетпĕр. Çакă икĕ çул хушшинче тăрать Белинский пире курма пилленĕ 1940 çул. Ун чух, майăн 27-мĕшĕнче, Константин Иванов çуралнăранпа 50 çул тулать. Совет çĕршывĕнчи халăхсем çакă паллă вăхăтсене тăванлăн йышăнса хисепре тытаççĕ.

Сунтал. 1939.11(175)№. Ноябрь.